Меценатов Ф. «Нарспи» авторне: [сăвă] / Ф. Меценатов // Чăваш коммунĕ. – 1940. – 11 юпа.

# „НАРСПИ“ АВТОРНЕ

Çурхи сад пек ешĕл çĕршывра
Янрать юрă пĕр-вĕçрен...
Савăнмашкăн пирĕн хушăра
Эс кăна халь çук-мĕн пĕр-пĕччен.

Вăхăтсăр эс кĕтĕн-çке çĕре,
Вăхăтсăр сан хупăнчĕ куçу.
Çамрăклах сан татăлчĕ чĕре,
Çамрăклах эс пĕтрĕн-çке, Кĕçтӳк...

Поэзи сачĕ чечекленнĕ чух
Сан ятна аснатпăр чĕререн.
Сан илемлĕ «Нарспипе» яту
Нихăçан çухалмĕç тĕнчерен.

Халь шавламасть сĕм-сĕм вăрман
Нарспи чунне хăратса.
Тек çук усал ват Тăхтаман,—
Хĕнеймĕ саламат йăтса.

Тек кашламасть хура вăрман
Хăратса хальхи çĕн Сетнере.
Çĕн Нарсписемшĕн çук халь
Тăхтаман,
Михетерсем çук çĕн тĕнчере.

Çурхи сад пек ешĕл çĕршывра
Янрать юрă пĕр-вĕçрен...
Савăнмашкăн пирĕн хушăра
Эс кăна халь çук-мĕн пĕр-пĕччен.

**Ф. МЕЦЕНАТОВ.**